Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Ара Мишши (Краснов Михаил Николаевич)**

**Книга: Çамрăк юлан утçă = Юный кавалерист**

# Рассказ: Çамрăк юлан утçă

Çуллахи каникул вăхăтěнче Макçăм тантăшěсемпе кун сиктермесěр ял хуçалăх ěçěсене хутшăнатчě. Арçын ачасем лашапа çÿреме юрататчěç. Анчах ку чыс пурне те тивěçместчě çав. Чи маттуррисене çеç ут шанса паратчěç. Выльăх-чěрлěхпе те пěр чěлхе тупма пěлмелле-çке-ха. Йěвен-тилхепене алăра çирěп тытмалла.

Макçăмсен тăван колхозě лаша кěтěвě тытатчě Вěсем валли ятарласа вите тунăччě. Ун пек пысăкки районта урăх пулман-тăр. Тěрлě ăратлă çěр ытла лаша усратчěç кунта.

Кÿлмелли лашасем пулăшнипе кулленхи тата тěрлě тапхăрти хирти ěçсене пурнăçлатчěç. Лаша авалтанпах хресченěн шанчăклă пулăшуçи-çке-ха. Кирек мěнле çанталăкра та − хěллехи çил-тăман-и, кěрхи-çурхи йěпе-сапа-и − эсě кăтартнă çулпа пěр пăркаланмасăр шав малаллах утать вăл.

Виçě çулччен ăйăр − тиха шутěнче. Ăна алла хăнăхтарма питě йывăр. Чарусăрскер кÿлтересшěн мар хăйне, тапать, çыртать. Хăй çине утланнă юлан утçа сирпěтсе антарас тесе кутăн-пуçăн сиккелет. Пур арçын та итлеттерейместь çав вěсене. Чылай чухне конюхсем е хăюллă яшсем (аслă классенче ăс пухакан арçын ачасем) çеç кÿлме хăнăхтараççě утсене.

Утланса çÿремелли лашасем те пурччě. Конюхсем каланă тăрăх, вěсем − урхамахсем. Кусем уйрăмах илемлě, çÿллě; хăвăрт чупаççě. Пысăк куçěсем кăвар пек çунса тăраççě. Сиккипе е юртса пынă чухне вăрăм çилхисем сывлăш хумěпе юмахри пек илемлěн вěлкěшсе пыраççě. Пěр вырăнта тăма юратмаççě урхамахсем, малти урисемпе тек-текех çěре кукалеççě, халь-халь тапса сикме хатěр тăраççě. Йывăр ěçе кÿлсе тухмаççě вěсене, Акатуя хутшăнма упраççě. Çулталăкěпех хатěрлеççě çав ăмăртăва, тренировкăсем ирттереççě. Маттурскерсене ятарлă шампуньпе çуса, çан-çурăмне щеткăпа хырса, тасатса тăраççě, çилхи-хÿрине якатаççě, тураса илемлетеççě. Мěн авалтан вěсене чěрě çăмарта çитерсе вăй кěртнě.

Макçăм урхамахсене питě юратать, айккинчен те пулин чылайччен сăнаса тăрать. «Эх! Пěрре те пулин утланасчě çавсене!» − вăрттăн ěмěтленет вăл. Анчах хальлěхе пěчěкрех-ха арçын ача, вěсем патне çывхарма хăрать. Тěлěкре пурпěр вěсемпех аташать. Урхамахěсем çунатлă пек. Макçăм улма-чăпар тěсли çине ларса çÿле-çÿле, тÿпене çитиех, вěçсе хăпарать пек... Сасартăк хăй те вěсенчен пěри пулса тăрать!..

Пěррехинче Макçăм тěлěкěсене амăшне каласа пачě.

− Ÿсетěн, ывăлăм, çавăнпа ярăнатăн, вěçетěн тěлěкре, − терě ăна пуçран шăлса амăшě.

Колхозра çăк (йывăр туртакан) лашасем те пурччě. Вěсене ытларах лаша кěтěвне çěнетме тытса усраççě, тепěр чухне йывăр лав туртмалли ěçсене конюхсем çеç кÿлеççě. Çутă хăйăр тěслěскерсем питě пысăк. Урисемпе таплаттарса пынă чухне çěр кисреннěн туйăнать. Вăтам çулти ачасем вěсем патне çывхарма та хăраççě. Илья Муромец лаши çакăн евěрлěрех пулнă-тăр.

Малаллахи ěç-пуç çуллахи каникул вăхăтěнче пулса иртрě. Хăмла плантацийěнче пěчěк бригада ěçлетчě. Арçынсем суха пуç тытнă, арçын ачасем вара лашасене йěвенрен çавăтса утаççě. Улттăмěш класс пěтернě Макçăм та − вěсен хушшинче. Хăйне лаша тытма ирěк панăшăн вăл шутсăр савăннă. Хěпěртемесěр, кашнинех шанмаççě ку ěçе. Выльăха хăрамасăр кÿлме те, тăварма та пěлмелле. Хăçан тата мěн çитернине пăхса тăмалла, шыв ěçтерме ертсе каймалла.

Çуллахи уяр кун. Хěвел тÿпене хăпарса çитсен самаях хěртме пуçларě. Шăрăх. Антун сăмах хушрě: «Ну, арсем, апат вăхăчě те çитрě. Хырăм хыр тăррине кайрě. Апатлансан вара начар улпут та выртса каннă тет. Эпир те сулхăнра хăяккăн тÿнěпěр. Эсир, çамрăксем, лашасене кÿлě хěррине шăварма илсе кайăр».

Ача-пăча çавна çеç кĕтнĕ тейĕн. Вĕсем йăпăр-япăр çикелерĕç, лашасене хăвăрт кăна тăварчĕç те сиккипе вĕçтерчĕç хушнă çĕре. Хăмла плантацийĕнчен иртсен Максăм сасартăках хăйсене хирĕç килекен амăшне курчĕ. Вăл хăйĕн участокĕ патнелле утатчĕ.

Колхоз хăмла нумай туса илетчĕ. Ку тĕлĕшпе районта çеç мар, республикăра та малтисен ретĕнчеччĕ. Кашни колхозницăна çичшер рет уйăрса паратчĕç. Пĕр ретре вара − ик çĕре яхăн хăмла авăрĕ. Çуркуннерен пуçласа хура кĕркуннеченех вăй хурать унта Максăм амăшĕ. Ачисем пулăшаççĕ, пĕрле ĕçлеççĕ. Малтанах тĕм çинче ик-виçĕ парка калча уйăрса хăвараççĕ. Тимĕр çекĕллĕ вăрăм шăчăсемпе çӳлти карта çине шпагат е пралук çакаççĕ. Ун тăрăх явăнса сакăр-вунă метр çӳллĕш çитĕнет те хăмла. Кĕркунне вĕсем çинче симĕс сапакасем çакăнса тăраççĕ. Аякран плантаци вăрман евĕрех курăнать. Хăйĕн йӳçенкĕрех усă шăршипе сăмсана кăтăклать, куçа илĕртет. Ун айккипе иртме те, кунта ĕçлеме те ырă.

Авăн уйăхĕн малтанхи кунĕсенче хăмла пуçтарма тухаççĕ. Сапакисем симĕс те тулли чухне хăвăрт пуçтарса ĕлкĕрмелле, çавăнпа ку ĕçе час-часах шкул ачисене те явăçтараççĕ. Пĕр кунта кашни вĕренекен вунă-вун пилĕк, опытлă колхозницăсем çирĕм-çирĕм пилĕк килограмм таран пухаççĕ. Кунта ĕçлекенсене аван тӳлеççĕ. Хайхи алла çыхмалли сехет тата велосипед туянмалăх ĕçлесе илме пулатех.

Максăм − лаша çинче, сиккипех пырать. Вăркăш çил ун питне уçăлтарать, çӳçне вĕл-вĕл вĕçтерет. Сасартăк амăшĕ умĕнче арçын ачан хăйне маттур юлан утçă пек кăтартас килсе кайрĕ. Вăл икĕ урипе те лашана айккинчен тапса илчĕ çеç − лешĕ уттине хăвăртлатрĕ. Амăшĕпе тĕлме-тĕл пулсан ача пĕтĕм вăйранах кăшкăрса ячĕ: «Анне, кур-ха, эпĕ епле сиккипе пыратăп!» Амăшĕн сăнĕ вĕлтлетсе хыçра юлчĕ. Максăм хăлхине: «Ывăлăм, асту, асăрхан!» − тени çеç кĕчĕ. Ача лашине шав хăваларĕ. Вăтăр-хĕрĕх метртан лешĕ сасартăк тăп! чарăнчĕ. Çакна кĕтмен шăпăрлан ирĕксĕрех малалла сулăнса кайрĕ. Аллипе ăйăра мăйĕнчен хыттăн ыталаса тытрĕ те ун пуçĕ умнех шуса анчĕ. «Мĕншĕн лаша çапла турĕ-ха?» − аптăрарĕ арçын ача. Умнелле тинкерчĕ, машина кустăрми выртать иккен, ун айĕнче вара çилпе целлофан хутаç вĕлкĕшет. Ахăртнех, çак япаларан хăранă шанчăклă тусĕ.

Максăм лашине лăплантарса ăшă сăмахсем каларĕ, ачашларĕ. Тепĕр хут утланса меллĕрех вырнаçса ларчĕ те малалла сиккипе чуптарса мар, уттарса кайрĕ. «Юрать-ха, анне курмарĕ, вăл курнă тăк епле намăс пулатчĕ», − тесе шухăшларĕ вăл ăшĕнче.

Максăм мĕн пĕчĕкрен амăшĕн сăмахне итлеме хăнăхнă. Вăл ăна начар вĕренсе е хăйне йĕркесĕр тытса хурлантарасран пит хăрать, çавăнпа яланах тантăшĕсен хушшинче чи лайăххи пулма, çывăх çыннине савăнтарма тăрăшать. Ырă та йăваш кăмăллă амăшĕн çепĕç пуплевĕ уншăн чи хакли-çке-ха.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.